28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮЛЬ
11
ЮНКУН
132 (6883) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ЧĂВАШ АССР 25 ÇУЛ ТУЛТАРНИНЕ ШУПАШКАРТА УЯВЛАНИ

Июлĕн 7-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи ĕççыннисем хăйсен республикин паллă юбилейне чаплăн уявларĕç. Юбилей ырăн пулать тенĕ чухнех хула уява хатĕрленсе çитрĕ.

Суртсем çинче, урамсем урлă—хĕрлĕ пир çине çырнă лозунгсем, илемлĕ транспорантсем.

Чăваш АССР Верховный Совечĕн юбилейлĕ сессине тата республика юбилейне иртерме тăванла республикăсенчен — Тутар, Утмурд, Мордва, Коми, Мари АССР-сенчен тата инçетри Якутирен хăнасем килчĕç. Мускав ĕççыннийĕсем Чăваш халăхĕн юбилейĕн уявне ятарласа делегаци ячĕç. Хăнасем хушшинче пирĕн мухтавлă земляксем, пирĕн çав тери аван Тăван çĕршывăн тĕрлĕ кĕтессисенчен килнĕскерсем нумай. Кусем вĕсем Чăваш республикинче кăна мар паллă, вĕсем хăйсен мухтавлă та паттăр ĕçĕсемпе хăйсене мĕнпур çĕршывĕпе чапа кăларчĕç. Аслă вырăс халăхĕн мухтавлă ывăлĕсенчен пĕрине—А. Боголюбов генерал-полковника, Шупашкарта çуралса ÿснĕскере, мĕнпур совет халăхĕ пĕлсе тăрать, унпа Чăваш республикинчи ĕççыннисем тивĕçлипех мухтанма пултараççĕ. Вăрçăра паттăр та хăюллă ĕçсем тунăшăн ăна полководецсене паракан тăватă орденпа, икĕ Ленин орденĕпе, тăватă Хĕрлĕ Ялав орденĕпе тата Совет Союз Геройĕн Ылттăн Çăлтăрĕпе наградăланă. Вăл ыттăн Украинăшăн, тăван Белоруссишĕн çапăçса, Польшăпа Германи çĕрĕ çинче çапăçса хăйне мĕнпур çĕршывĕпе чапа кăларчĕ. Верховный Главнокомандующин Совет Союзĕн Маршалĕн И. В. Сталинăн приказĕсене радио тăрăх панă чаплă самантсенче Сталин юлташ саперсемпе артиллеристсене, пирĕн земляксем Петров генералпа Воскресенский полковник ертсе пынăскерсене, тав тунине пирĕн республикăри ĕççыннисем темиçе хутчен те илтнĕ. Паян вĕсенчен пĕрийĕ—гварди полковникĕ, сакăр орденан кавалерĕ Виталий Воскресенский пирĕн хаклă хăнасем хушшинче. Мускаври килнĕ хăнасем хушшинче Сталинла премин лауреачĕ, СССР халăх артисчĕ М. Михайлов. Юбилейлĕ сессире — республикăри законсем кăларакан чи аслă учрежденин ларăвĕнче—вайлă тырпул мастерĕсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен стахановецсем, предприятисенчи чи лайăх производственниксем тата интеллигентсем пур, вĕсем хăйсен ырми-канми ĕçĕпе фронтовиксене мухтавлă ĕçсем тума пулăшса пычĕç.

Çак чаплă земляксемпе Шупашкарта тĕл пулнине пурте нумай çулсем хушши асра тытса пурăнĕç.

Сесси уçăличчен темиçе минут малтанах çап-çутă залра чаплă шăплăх. Пурте сесси пуçланасса кĕтеççĕ. Пурте сцена çине, юратакан тата хаклă аслă Сталинăн сăнĕ тăнă çĕре пăхаççĕ. Çак чаплă минутра залри çынсем пурте тăван Сталина—пирĕн халăха вăрçăра та, ĕçре те çĕнтерÿсем тума хавхалантарса тата организацилесе пыракан çынна асăнаççĕ.

12 сехетре Чăваш АССР Верховный Совет Председателĕ Н. Павлов депутат кĕске сăмах каласа, республика 25 çул тултарнă ятпа юбилейлĕ сесси уçать.

В. Чернов депутат сĕннĕ тăрăх, юбилейлĕ сессин президиумне Чарыков, Андреева, Матвеев юлташсене, РСФСР Верховный Совет Президиум Председателĕн Заместительне Власов юлташа, Совет Союзĕн Геройне Боголюбов генерал-полковника, Ахазов, Андреев, Логвин, Белолипецкий, Бобров, Вишняков юлташсене, СССР халăх артистне Сталинла премин лауреатне М. Михайлова, Атăл тăрăхĕнчи Çар Округĕн командующин заместительне Селезнев генерал-майора, Мускав ĕççыннийĕсен делегацийĕн руководительне Галкина, нациллĕ тăванла республикăсен делегацийĕсен руководителĕсене, пысăк заводсен директорĕсене, колхоз председателĕсене, стахановецсене, чăваш поэчĕсене Эльгерпе Эсхеле, Совет Союзĕн Геройĕсене Ахаева, Сапожникова, Тухланова, Яшина, Полякова, Чемолосов профессора тата ыттисене те суйлаççĕ.

Ахазов депутат юбилейлĕ сессин хисеплĕ председателĕ пулма халăхсен çулпуçне Совет Союзĕн Генералиссимусне аслă Сталина суйлама сĕнет. Депутатсемпе хăнасем пурте, пĕр çын пек пулса, пĕр харăс ура çине тăраççĕ. Ура çинче тăрса вĕсем çĕнтерÿ тăвакана, пирĕн Тăван çĕршыва çăлса хăваракана генилле Сталина нумайччен саламлаççĕ.

Ахазов депутат мухтавлă президиум суйласси çинчен сĕпнине сесси пĕрсаслăн йышăнать. Молотов, Калинин, Ворошилов, Каганович, Андреев, Микоян, Жданов, Хрущев, Шверник, Берия, Маленков, Вознесенский юлташсен ячĕсене депутатсемпе хăнасем тăвăллăн аллă çупса йышăнаççĕ.

Сессие пухăннă çынсем Чăваш АССР 25 çул тултарни çинчен Чăваш АССР Совнарком Председателĕн Матвеев юлташăн докладне тимлĕн итлеççĕ. Докладчик Советлă Чăваш çĕршывĕ Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе пурăнса иртнĕ мухтавлă кунçул çинчен тĕплĕн каласа парать.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ, СССР Верховный Совет Президиумĕ, РСФСР Верховный Совет Президиумĕпе Совнаркомĕ республика 25 çул тултарнă ятпа Чăваш республикинчи рабочисене, колхозниксемпе интеллигентсене саламласа янă телеграммăсене сессире тăвăллăн аллă çупса итлеççĕ. Саламлă сăмах каламашкăн РСФСР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕн пĕрремĕш Заместителĕ А. А. Власов юлташ сăмах илет.

Мускав ĕççыннийĕсен делегацийĕн руководительне Галкин юлташа сăмах параççĕ. Вăл Мускав Совечĕн исполкомĕн тата ВКП(б) Мускав хула комитечĕн саламлă çырăвне вуласа парать. Çав çырура пирĕн Тăван çĕршывăн столицинчи —Мускав хулинчи ĕççыннисен ячĕпе Чăваш АССР-ĕнчи колхозниксене, рабочисемпе интеллигентсене саламланă.

— РСФСР составĕнче,—тенĕ çырура, —Чăваш республики яланах вырăс халăхĕн юратнă тăванĕ пулнă. Мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле Мускав ĕççыннийĕсем Советлă Чăваш çĕршывĕнчи ĕççыннисем хуçалăхпа культура задачисене, большевиксен партийĕпе Совет правительстви кăларса тăратнăскерсене, татса парас тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемшĕн питĕ хавасланса тав тăваççĕ.

Сессие пухăннă çынсем Мускав ĕççыннийĕсен çакăн пек ăшă саламне хавхаланса йышăнаççĕ. Залра: «Сывă пултăр юратнă Мускав!» тенĕ сасăсем илтĕнеççĕ.

Депутатсемпе хăнасем Совет Союзĕн Геройĕн А. Н. Боголюбов генерал-полковникăн сăмахне хĕрÿллĕн кĕтсе илеççĕ.

— Хаклă юлташсем, земляксем!—тет вăл.—Сире эпĕ пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп. Чăваш республики 25 çул тултарни вăл—манăн пурнăçра питĕ паллă кун пулса тăрать. Эпĕ 13 çул пулман хыççăн çак хулана, хам çуралнă хулана, мана пăхса çитĕнтернĕ хулана, эпĕ хамăн кун-çулăн малтанхи утăмне пĕлнĕ хулана килтĕм. Паянхи кун маншăн ĕмĕр манми кун пулса тăрать.

Сире эпĕ Белоруссири 2-мĕш фронтăн мухтавлă воинсенчен — боецсенчен, сержантсенчен, офицерсенчен, генералсенчен тата фронт командующийĕнчен Совет Союзĕн Маршалĕнчен К. Рокоссовский юлташран хĕрÿллĕ салам калатăп.

Боголюбов юлташ аслă Сталин ертсе пынипе совет халăхĕ гитлерла Германие çĕнтерни историре мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каласа парать.

— Эпир çакăншăн пурнишĕн те,—тет оратор,—пĕр çынна, вăрçă вăхăтĕнче пĕр самант та канма пĕлмен çынна, чи пĕчĕк япаласене те ăнланса кăтартса пынă çынна, генилле полководеца, Совет Союзĕн Генералиссимусне Сталин юлташа тав тумалла. Депутатсемпе хăнасем çак сăмахсене тăвăллăн аллă çупса йышăнаççĕ.

Боголюбов юлташ фронтра чухне узбексемпе чăвашсене, украинецсемпе белоруссене тата ытти нумай халăхсене тĕл пулма тÿр килни çинчен каласа парать. Вĕсем пурте Советлă Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн паттăр та мухтавлăн çапăçрĕç.

Юлашкинчен Боголюбов юлташ Чăваш республики чĕрĕк ĕмĕр хушшинче тунă пысăк çитĕнÿсем çинчен каласа парать.

Боголюбов генерал-полковникăн сăмахĕ хыççăн сесси пирĕн çĕнтерÿве организацилекенĕ—халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин патне саламлă çыру яма пĕр саслăн йышăнать.

Молотов, Калинин, Шверник юлташсем тата РСФСР Совнарком Председателĕ Косыгин юлташ патне саламлă çырусем яма сĕннине тăвăллăн аллă çупса йышăнаççĕ.

Депутатсемпе хăнасем Шупашкар хулинчи пионерсен делегацине, юбилейлĕ сессие пухăннă çынсене саламлама пынăскерсене, ăшшăн кĕтсе илеççĕ.

Çавăн пекех тата Шупашкар хулинчи интеллигентсен ячĕпе Аркадий Эсхель поэт тата Куславкка комбинатĕнчи коллектив ячĕпе Петрученко юлташ сăмахсем тухса каларĕç.

Тутар, Мари, Мордва, Якут тата Коми автономиллĕ республикисенчен килнĕ представительсем уяв ячĕпе Чăваш республикинчи ĕççыннисене саламлă сăмахсем калаççĕ. Сессие пухăннă çынсем тăванла республикăсенчен килнĕ хăнасене ăшшăн саламларĕç.

Унтан саламлă сăмах калама Шупашкарти 14-мĕш запаслă дивизин представительне Бритвин майора сăмах параççĕ.

Юбилейлĕ сесси ларăвĕн юлашки пайĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ Измайлов юлташ тăванла нациллĕ республикăсенчен, СССР тата РСФСР наркомачĕсенчен илнĕ саламсене вуласа парать.

Çакăнпа Чăваш АССР Верховный Совечĕн юбилейлĕ сессийĕ хупăнать.

* * *

Июлĕн 7-мĕшĕнче каçхине юбилейлĕ сессие пухăннă хăнасемпе депутатсене валли пысăк концерт пулчĕ. Чăвашсен юрăпа ташăн государство ансамблĕ концерт кăтартрĕ. СССР халăх артисчĕн Сталинла премин лауреачĕн Михайловăн выступленийĕ пурне те кăмăла кайрĕ. Вăл вырăссен халăх юррисене юрласа пачĕ.

Хĕрлĕ площадьре уяв ячĕпе карнавал, массăллă вăйăсемпе ташăсем пулчĕç.

* * *

Июлĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарта хулари ĕççыннисен митингĕ тата физкультурниксен парачĕ пулса иртрĕ.

11 сехет тĕлне Хĕрлĕ площаде тăватă енчен демонстрантсен колоннисем пухăнма пуçларĕç. Хĕрлĕ площаде уяв ячĕпе илемлетнĕ. Унта халăхсен çулпуçĕн Сталин юлташăн сăнĕ, ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро членĕсен сăнĕсем пур.

12 сехет. Трибуна çине республикăри партипе совет органĕсен руководителĕсем, Совет Союзĕн Геройĕ Боголюбов генерал-полковник, Трофимов генерал-майор, Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕсем тата хăнасем хăпараççĕ.

Митинга ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Ислюков юлташ уçать.

ВКП(б) Обкомĕ ячĕпе тата Чăваш АССР Совнаркомĕ ячĕпе саламлă сăмах калама ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ И. М. Чарыков юлташ сăмах илет.

Унтан Шупашкар хулинчи ĕççыннисен митингне пухăннă çынсене Мускав хулинчи ĕççыннисен ячĕпе Мускав Совечĕн исполкомĕн тата ВКП(б) Мускав хула комитечĕн представителĕ Галкин юлташ саламлă сăмах калать.

Совет Союзĕн Геройĕн Боголюбов генерал-полковникăн сăмахне ăшшăн йышăнаççĕ.

Чăваш республикинчи çамрăксен ячĕпе ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ Михайлов юлташ саламлă сăмах калать.

Митинга пухăннă ĕççыннисем Сталин юлташ патне ямалли саламлă çырун текстне питĕ хавасланса йышăнчĕç.

Митинг хыççăн хулари физкультурниксен парачĕ пулчĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене, ялхуçалăх, промышленность, культурăпа искусство работникĕсене орденсемпе тата медальсемпе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 131-мĕш номерĕнче).

ĔÇЛĔХ ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

23. Григорий Алексеевич **Мартынова**—ВКП(б) Чăваш Обком секретарĕн выльăх-чĕрлĕх енĕпе ĕçлекен заместительне.
24. Николай Николаевич **Никитина** — ВКП(б) Чăваш Обком секретарĕн промышленность енĕпе ĕçлекен заместительне.
25. Федор Семенович **Никонова** — Вăрнар МТС директорне.
26. Петр Осипович **Осипова** — ĕççынни депутачĕсен Совечĕн Вăрнар районĕнчи исполкомĕн председательне.
27. Виктор Фомич **Ремизова** — Калинино МТС-ĕн старши механикне.
28. Мария Михайловна **Романовăна** — ВКП(б) Чăваш Обком секретарĕн сутуилÿ тата обществăллă апатлану енĕпе ĕçлекен заместительне.
29. Иван Трофимович **Сапаркина** — Вăрмар райçĕрĕç пайĕн заведующине.
30. Федор Тимофеевич **Семенова** — Чăваш АССР Совнарком председателĕн пĕрремĕш заместительне.
31. Николай Семенович **Соколова** — эвакогоспиталь начальникне.
32. Александр Васильевич **Семова** — ВКП(б) Етĕрне райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
33. Филипп Павлович **Суслина** — «Гражданстрой» трестĕн рабочине-мозаичникне.
34. Александр Иванович **Улендеева** — Елчĕк районĕнчи старши ветеринари врачне.
35. Вадим Петрович **Чернова** — ВКП(б) Шăмăршă райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
36. Леонтий Георгиевич **Шерстюка** — ВКП(б) Улатăр хула комитечĕн пĕрремĕш секретарьне.
37. Иван Никандрович **Широва** — Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарне.
38. Семен Васильевич **Эльгере** — Чăваш АССР халăх поэтне.

«ХИСЕП ПАЛЛИ» ОРДЕНПА

1. Петр Иванович **Аникина**—ĕççынни депутачĕсен Совечĕн Шупашкар хулинчи исполкомĕн председательне.
2. Павел Афанасьевич **Афанасьева** — Ишлей районĕнчи «Осоавиахим» колхоз председательне.
3. Кузьма Тимофеевич **Большакова** — Улатăрти 7-мĕш номерлĕ вăрман завочĕн главнăй инженерне.
4. Андрей Васильевич **Васильева** — Канашри «Авангард» артелĕн председательне.
5. Павел Степанович **Васильева** — Октябрьски районри Тимошенко ячĕпе тăракан колхоз председательне.
6. Александр Степанович **Вишнякова**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарьне.
7. Абдулла Гаязович **Гаязова**—Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председательне.
8. Иван Георгиевич **Георгиева**—ВКП(б) Комсомольски райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
9. Дмитрий Григорьевич **Григорьева**—ĕççынни депутачĕсен Совечĕн Шăмăршă районĕнчи исполкомĕн председательне.
10. Григорий Аркадьевич **Гутмана** — Шупашкарти ача суратмалли суртăн главнăй врачне.
11. Андриан Герасимович **Долгова** — ВКП(б) Канаш райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
12. Иван Васильевич **Дубова** — ВКП(б) Шăмăршă райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
13. Татьяна Матвеевна **Дугаевăна** — Пăрачкав районĕнчи «Правда» колхозри махорка лартса çитĕнтерекен звеньевоя.
14. Константин Ермолаевич **Евлампьева** — Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместительне.
15. Сергей Федорович **Егорова** — Улатăр районĕнчи Алтышевăри топливо леспромхозĕн вăрман турттаракание.
16. Спиридон Ефремович **Ефремова** — Куславкка районĕнчи «Динамо» колхоз председательне.
17. Сергей Семенович **Железнова** — Сĕнтĕрвăрри райçĕрĕç пайĕн заведующине.
18. Николай Алексеевич **Жолобова** — Куславкка районĕнчи «Красный курган» колхоз председательне.
19. Лев Васильевич **Зайцева**—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн сектор заведующине.
20. Григорий Дмитриевич **Захарова** — ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
21. Анатолий Степанович **Зверева** — Чăваш АССР Вăрман промышленность Халăх Комиссарне.
22. Геннадий Иванович **Иванова** — Улатăр МТС директорне.
23. Александр Измайлович **Измайлова**—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн секретарьне.
24. Константин Ильич **Ильина**—Чурачăк районĕнчи «Шумашар» колхоз председательне.
25. Семен Матвеевич **Ислюкова** — ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн иккĕмĕш секретарьне.
26. Григорий Иванович **Калинцева** — Чăвашсен ялхуçалăх институтĕн директорне.

(Малалли пулать).

Чăваш АССР Верховный Совечĕн юбилейлĕ сессийĕнче РСФСР Верховный Совет Президиумĕн пĕрремĕш Заместителĕ И. А. Власов тухса калани

Юлташсем! РСФСР Верховный Совечĕн Президиумĕ хушнипе Сире тата Чăваш республикинчи мĕнпур рабочисене, колхозниксене, интеллигенцие Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики 25 çул тултарнă май РСФСР Верховный Совечĕн Президиумĕ ячĕпе хĕрÿллĕн саламлатăп. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

Иртнĕ 25 çул хушшинче чăваш халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, хуçалăхпа культура строительствинче пысăк çитĕнÿсем турĕ.

Чăваш халăхĕ хăй ĕмĕр кая юлса пынине пĕтерчĕ, нациллĕ социализмлă культура тăвас тĕлĕшпе пысăк çитĕнÿсем турĕ. Чăваш республикинче чăваш шкулĕсем, техникумĕсем, аслă шкулĕсем уçнă, чăваш халăхĕн çырулăхĕ, искусстви аталанса пыраççĕ, интеллигенцин чăвашран тухнă кадрĕсем ÿссе çитĕнчĕç.

Юлташсем, Чăваш республики ялхуçалăхне, промышленноçа, культурăна малалла аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсене Совет правительстви пысăка хурса хакларĕ, вăл Чăваш республикинчи чи лайăх, чи малта пыракан çынсене орденсемпе медальсем парса наградăларĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Юлташсем! Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине туни 25 çул тултарнине чăваш халăхĕ савăнăçлă кунсенче, генилле полководец Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ ертсе пыракан паттăр Хĕрлĕ Çар гитлерла Германие пуçĕпех аркатса тăкса пирĕн çĕршыва пысăк чапа кăларнă кунсенче, тăшмана пуçĕпех çĕнтернĕ кунсенче уявласа ирттерет. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

Çак кунсенче эпир хамăр халăхпа тăван Хĕрлĕ Çар утса тухнă çула аса илетпĕр. Çав çул йывăр пулчĕ, анчах та вăл чаплă çул пулчĕ, вăл кĕрешÿпе çĕнтерÿ çулĕ пулчĕ.

Пысăк хăрушлăх умĕнче аслă вырăс халăхĕ-хăраса ÿкмерĕ. Вырăс халăхĕ, çамрăккисенчен пуçласа ваттисене çитиччченех, хамăр çĕршыва хÿтĕлеме çĕкленчĕ, хăйпе пĕрле Совет Союзĕнчи ытти халăхсене те ертсе пычĕ, гитлерла вăрă-хурахсене пуçĕпех çапса çĕмĕрчĕ, фашистла Германие пĕр сăмахсăрах парăнтарчĕ. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

Совет халăхĕ социализмлă çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварчĕ çеç мар, вăл тата Европăри мире юратакан нумай халăхсене фашистла чуралăхран çăлса кăларчĕ, çакăншăн ăна халь пурте хисеплеççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем тăшмана çĕнтерес тесе, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, таса совет çĕршывĕн кашни утăмне калама çук паттăррăн хÿтĕлесе тăчĕç. Тăшмана çĕнтермешкĕн рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем тата совет интеллигенцийĕ хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пĕлĕвне фронтпа çĕршыва мĕн кирлине пурне те парса тăрас ĕçе пачĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче чăваш халăхĕ хăй умĕнче тăракан задачăсене лайăх ăнланнине кăтартса пачĕ, Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн патриотла тивĕçне чыслăн пурнăçларĕ.

Чăваш республикин ывăлĕсем—Хĕрлĕ Çар воинĕсем—хамăр Тăван çĕршыва, хамăрăн социализмлă çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕлесе, хастаррăн та паттăррăн çапăçрĕç. Чăваш республикинчи ĕççыннисем курайми тăшмана часрах аркатса тăкмашкăн фронта пулăшас тесе, фабрикăсемпе заводсенче тата колхозсемпе совхозсенче хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлерĕç.

Юлташсем! Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Чăваш республики Россия федерацийĕн промышленноçĕнчи чи паха районĕсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Чăваш республики фронт çывăхĕнчи вырăнсенчен куçарса килнĕ чылай предприятисене йышăнса, вĕсене кĕске срокрах ĕçе ячĕ. Çав предприятисенчен нумайăшĕ çĕнĕ вырăнта сарăçчĕнех ... ытларах продукци туса тăчĕç, вĕсем фронтпа çĕршыва кирлĕ тĕрлĕ йышши продукци парса тăчĕç.

Чăваш республикинчи пĕтĕм промышленность 1944 çулта 1939 çулхинчен 5 хут ытларах продукци туса пачĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем, кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, Хĕрлĕ Çар валли чи лайăх йышши хĕçпăшалсем туса тăчĕç. Фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтермешкĕн фронтпа çĕршыва мĕн кирлине пурне те парса тăчĕç.

Халĕ, Отечественнăй аслă вăрçă çĕнтерÿллĕн вĕçленĕ хыççăн, Чăваш республикин промышленноçне тата ытларах аталантарма, ĕççыннисене çав тери кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерме тата пысăкрах майсем тупăнчĕç.

Чăваш республикинчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем кăçал промышленноçа малалла аталантарас тата куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларас тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнÿсем тăвĕç, тесе шанса тăратăп эпĕ.

Гитлерла Германие хирĕç пынă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн халăхăн чи йывăр задачăна—Хĕрлĕ Çарпа хула халăхне апатçимĕç парса тăрас задачăпа пурнăçлама тиврĕ.

Фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсем, Совет Союзĕн тырă чи лайăх пулакан районĕсене вăхăтлăха тытса илсе, пирĕн çарпа çĕршыва апат-çимĕççĕр тăратса хăварма шутланă. Ирсĕр захватчиксен çав планĕ пăчланса ларчĕ.

Пирĕн çĕршыври колхоз йĕркине пула ĕççыннисем хăйсен Тăван çĕршывне, большевиксен партине тата Совет правительствине чунтан парăнса ĕçленипе пула, Совет Союзĕнчи колхоз хресченĕсем вăрçă вăхăтĕнчи пысăк йывăрлăхсене чыслăн тÿссе ирттерчĕç, Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва апат-çимĕç парса тăрас задачăна ăнаçлăн пурнăçларĕç.

Чăваш республики кăçал çураки вăхăтĕнче вăйлă тырпул туса илес ĕçĕн никĕсне хыврĕ. Колхозсен хирĕсенче тырăсемпе техникăллă культурăсем лайăх ÿссе çитĕнеççĕ.

Колхозлă ялăн мĕнпур вăйне халь акнă тырăсене лайăх пăхас ĕçе, чи малтан—çум çумлас ĕçе мобилизацилемелле.

Колхозсем умĕнче, партипе комсомол организацийĕсем умĕнче, советсемпе çĕрĕç органĕсем умĕнче хальхи вăхăтра хуçалăхпа политикăллă чи паха задача тăрать—тырпул пухса кĕртме вăхăтра хатĕрленмелле, тырпул пухса кĕртес ĕçе тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе кăтартуллăн ирттермелле.

Халăх хуçалăхĕн çак питĕ пысăк задачине пурнăçланă чухне Сталин юлташăн çак сăмахĕсене асра тытса тăрас пулать: «Тырă пухса кĕртес ĕç вăл хай вăхăтĕнче тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăмасть. Вăхăтра пухса кĕртрĕн—нумай тырпул туса илтĕн, вăхăтра пухса кĕртмерĕн—нумай çухатрăн».

Эпĕ çакна çирĕп шанса тăратăп: Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсемпе ялхуçалăхĕнчи ытти работниксем тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе ăнаçлăн туса ирттерчĕç, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнÿсене йышлăлатрĕç, çапла вара хамăрăн социализмлă çĕршывăн çарпа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне тата ытларах ÿстерчĕç.

Юлташсем! Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет строй тата ытларах çирĕпленчĕ, пирĕн йышлă халăхлă Совет государстви тата ытларах хăватланчĕ.

«Совет стройĕ мирлĕ строительство çулĕсенче хамăр çĕршыва экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен малалла ÿстерсе пырассине организацилемелли чи лайăх форма çеç мар пулса тăчĕ. вăл тата вăрçă вăхăтĕнче тăшмана сирсе ямашкăн халăхăн мĕнпур вăйне мобилизацилемелли чи лайăх форма пулса тăчĕ» (Сталин).

Юлаш... 2-мĕш страницăра.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

1-мĕш Михая, Румыни королльне, „Çĕнтерÿ“ орденĕ парасси çинчен

Германи поражени тÿсесси уççăнах паларса çитеймен тапхăртах Румыни политикине гитлерла Германипе çыхăну тытма пăрахас тата Пĕрлешнĕ нацисемпе союзлă пулас еннелле хăюллăн та татăклăн çавăрса янăшăн Унăн Величествине Пĕрремĕш Михая, Румыни корольне, «Çĕнтерÿ» орденĕ парса наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июлĕн 6-мĕшĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕ Чойбалсан маршал ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

Июлĕн 7-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патĕнче Кремльте Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕ Чойбалсан маршал ячĕпе апатлану пулса иртнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕ Чойбалсан маршал, Монголи Халăх Республикин Совет Союзĕнчи Посланникĕ Д. Самбу, Монголи университечĕн ректорĕ Ширендыб, Монголи Халăх Республикин Совет Союзĕнчи Миссийĕн Секретарĕ Идамжаб тата ыттисем те.

Советсем енчен апатланура çаксем пулнă: В. М. Молотов, Л. М. Каганович, Л. П. Берия, Г. М. Маленков, Н. А. Вознесенский, Н. А. Булганин, СССР Государство Хăрушсăрлăх Халăх Комиссарĕ В. Н. Меркулов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинскипе С. А. Лозовский, СССР Тулашри Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Ю. М. Каганович, Совет Союзĕн Монголи Республикинчи Посланникĕ И. А. Иванов, генерал-лейтенант Н. Г. Рубин тата СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем.

Апатлану ăшшăн та туслăн пулса иртнĕ.

Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕ Чойбалсан маршал Мускавран тухса кайни

Июлĕн 8-мĕшĕнче Монголи Халăх Республикин Премьер-Министрĕ Чойбалсан маршал Мускавран тухса кайнă.

Унпа пĕр вăхăтрах Мускавран Совет Союзĕн Монголи Республикинчи Посланникĕ И. А. Иванов тухса кайнă.

Центральнăй аэродромра Чойбалсан маршала çаксем ăсатса янă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ—Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Государство Хăрушсăрлăх Халăх Комиссарĕ В. Н. Меркулов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский, СССР Тулашри суту-илÿ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Ю. М. Каганович, генерал-полковник Ф. Ф. Кузнецов, генерал-лейтенант К. Р. Синилов, СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем Ф. Ф. Молочковпа М. Ш. Бахитов. Ăсатма çĕрте тата Монголи Халăх Республикин Совет Союзĕнчи Ĕçри вăхăтлăх поверенăйĕ Н. Ишижаб пулнă.

Ăсатса яна чухне хисеплĕ хурал тăратнă. Монголи Халăх Республикин тата Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă.

Аэродрома Монголи ялавĕсемпе Совет ялавĕсене çакса илемлетнĕ.

Чăваш АССР 25 çул тултарнине Шупашкарта уявлани

И. А. Власов юлташ сăмахĕн вĕçĕ

(Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

Совет государствине вăрçăпа политика тата хуçалăх тĕлĕшĕнчен татах та хăватлăлатас тĕлĕшпе пирĕн çĕршыври ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем, çав шутра Чăваш республикинчи ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем те, пысăк ĕç туса ирттерчĕç, совет халăхĕ гитлерла Германие çав тери чаплăн çĕнтерес ĕçе пысăк пулăшу пачĕç.

Мирлĕ аталану тапхăрĕнче пирĕн халăх умĕнче тăракан пысăк задачăсене йăнăçлăн та вăхăтра пурнăçламашкăн ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен тата хайăхрах ĕçлемелле.

Вырăнти Советсен Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемшĕн, вăрçăра вилнĕ çынсен çемьисемшĕн тата çар çыннисен çемьисемшĕн уйрăмах хытă тăрăшмалла.

СССР Верховный Совечĕн нумаях пулмасть Мускавра пулса иртнĕ XII-мĕш сессийĕ аслăрах çултисене çартан киле ярасси çинчен калакан Закона йышăнчĕ. Унта киле яракан çар çыннисене пулăшас тĕлĕшпе тата вĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе тумалли чи паха ĕççене палăртса панă. Çав ĕççем Хĕрлĕ Çарăн воинĕсемшĕн, хăйсен Тăван çĕршывĕ умĕнчи тивĕçне вĕçне çитиччен пурнăçласа, хăйсен çемьисем патне, мирлĕ ĕç ĕçлеме таврăнакан воинсемшĕн Сталинла тăрăшнине кăтартса параççĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен Совечĕсем хамăр Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çынсене кĕтсе илме лайăх хатĕрленмелле, çав çынсемшĕн тимлĕн тăрăшмалла.

Юлташсем! Хальхи вăхăтра ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем умĕнче хуласемпе ялсене юсаса илемлетес тĕлĕшпе пысăк задачăсем тăраççĕ. Пирĕн çуртйĕрсене, коммунальнăй предприятисене юсас ĕçе, хуласемпе ялсенче йывăççем лартас ĕçе, урамсемпе тротуарсене юсас ĕçе тата ĕççыннисен кулленхи нушисене тивĕçтерес ĕççене кĕске вăхăтрах анлăн сарса ямалла.

Чăваш республикинчи ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем, çулйĕр ĕçĕсене анăçлăн туса ирттернĕскерсем, хуласемпе ялсене юсаса илемлетес ĕçе те лайăх туса ирттерчĕç.

Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине туни 25 тултарнă кун Сире Чăваш республикине малалла чечеклентерсе ӳстерсе пыма ырă сунатăп. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Чăваш республикинчи ĕççыннисем хуçалăхпа культурăна аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсене мирлĕ аталану тапхăрĕнче йышлăлатассине эпĕ çирĕп шанса тăратăп.

Сывă пултăр Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики!

Сывă пултăр пирĕн социализмлă çĕршыври халăхсен çирĕп туслăхĕ!

Сывă пултăр никам çĕнтереймен паттăр совет халăхĕ!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри коммунистсен (большевиксен) Партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ, фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес ĕçе организацилесе хавхалантарса пынă парти!

Пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çара—мухтав!

Пирĕн аслă çулпуçа, Совет Союзĕн Генералиссимусне аслă Сталина—мухтав! (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ).

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарыков юлташ митингра тухса каланă сăмах

Юлташсем—рабочисемпе работницăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, интеллигентла ĕçĕн работникĕсем тата пирĕн хаклă хăнасем!

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата партин Чăваш Обкомĕ ячĕпе тата вĕсем хушнипе Сире Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики 25 çул тултарнă ятпа саламласа ырă сунатăп!

Чăваш республикинчи ĕççыннисем хăйсен чаплă юбилейне Совет Союзĕ гитлерла Германие хирĕç туса пынă Отечественнăй аслă вăрçă çĕнтерӳллĕн вĕçленнĕ кунсенче, çĕнтерĕвĕн таса ялавне Атлантан пуçласа Эльба шывĕ патне чыслăн çĕклесе çитернĕ паттăр Хĕрлĕ Çар хăйĕн чаплă çĕнтерĕвне уявланă кунсенче палăртаççĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, пирĕн вĕçĕ-хĕррисĕр Тăван çĕршыври ытти мĕнпур халăхсем пекех, паянхи кун, чи малтан, совет халăхĕн историллĕ çĕнтерĕвĕсене тăвакана, пирĕн саманари чи аслă çынна — хамăрăн çулпуçăмăра, туссăмăра учителĕмĕр Сталин юлташа пĕтĕм чун-чĕререн саламласа тав тăваççĕ.

Чăваш халăхĕ çак уяв кунĕсенче аслă вырăс халăхне—хăйĕн аслă тăванне тата руководительне пĕтĕм чун-чĕререн саламласа тав тăвать. Ултавлă вăйлă тăшмана хаяр çапăçу пынă çулсенче вырăс халăхĕ пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсене Ленинпа Сталинăн никам çĕнтереймен аслă ялавĕ айне пĕтĕçтерсе тăратрĕ, вĕсене историллĕ çĕнтерӳ патне илсе çитерчĕ.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ куллен тăванла пулăшса тăнипе, Россия федерацийĕнчи ытти халăхсемпе туслăн пурăнса, пирĕн республика чаплă çула утса тухрĕ. Хăй пурăнса ирттернĕ 25 çул хушшинче вăл Совет Союзĕнчи халăхсен сталинла туслă та пĕрлĕхлĕ çемьинче хăйне тивĕçлĕ вырăна йышăнчĕ.

Чăваш халăхне ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçăн чăн-чăн çулне Ленин—Сталин партийĕ кăтартса пачĕ, халăх çав çулпа пĕр пăркаланмасăр утса пычĕ. Çав çул вăл вырăс рабочи класĕпе, аслă вырăс халăхĕпе туслă пурăнмалли çул пулса тăрать.

Октябрьти Социализмлă Аслă революци чуралăх сăнчăрне ĕмĕрлĕхех татрĕ, чăваш халăхне ирĕке кăларчĕ, ăна пирĕн Тăван çĕршыври халăхсен туслă çемьипе пĕрле çĕнĕ пурнăç тума ертсе кайрĕ. Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, вырăс халăхĕ, пирĕн çĕршыври мĕнпур халăхсене пĕр государствăн хăватлă союзне организацилесе пĕтĕçтерекен халăх, ĕлĕкхи саманара кайра тăнă халăхсене, вăл шутра чăваш халăхне те, хăйĕн государствине аталантарма, хăйĕн нациллĕ кадрĕсене, культурине, малта тăракан промышленноçне аталантарма, ялхуçалăхне социализм никĕсĕ çинче урăхлатса йĕркелеме пулăшрĕ.

Ленин—Сталин партийĕ ыванма пĕлмесĕр тăрăшса пынипе тата вырăс халăхĕ куллен пулăшса тăнипе республикăра империалистла вăрçăпа граждан вăрçи хыççăн арканса юлнă хуçалăха хăвăрт юсаса ура çине тăратнă, халăх хуçалăхне çулран-çул ӳстерсе пынă. Сталинла пилĕкçуллăхсем пирĕн республикăн сăнсăпатне тĕпренех улăштарчĕç. Республикăра çĕнĕ шултăра предприятисем туса ĕçе янă.

25 çул хушшинче республикăра транспортпа çыхăну средствисене аталантарас тĕлĕшпе пысăк ĕççем туса ирттернĕ. Чăваш республикинчи ĕççыннисем шоссе, торцовка çулĕсем, тăпраран хытарса тунă çулсем йышлăн хывса тухрĕç. Канашпа Шупашкар хушшинчи чугун çула хывнă, çакă вăл республикăри промышленноçа тата унăн столицине Шупашкар хулине çĕнĕрен малалла ӳстерсе пыма пулăшрĕ.

Октябрьти революци хыççăн Чăваш республикин ĕçхресченĕсем хăйсен аллине чи лайăх çĕрсем илчĕç. Республикăри парти организацийĕ, партин сталинла Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе, хамăрăн ялхуçалăхне социализмла йĕркепе урăхлатма çĕнетес задачăна анăçлăн татса пачĕ. Эпир большевиксен партине, совет правительствине, вырăс рабочи класне пире çавăн пек питĕ пысăк пулăшу панăшăн тав тăватпăр.

25 çул хушшинче республикăра культура строительстви тĕлĕшпе пысăк ĕççем туса ирттернĕ. Хамăрăн аслă шкулсене—педагогика институтне, учительсен институтне тата ялхуçалăх институтне тунă. Вĕсем çĕршыв валли пысăк квалификациллĕ пиншер работник пачĕç: Пирĕн хамăрăн техникумсемпе училищĕсем пур. Вĕсенче халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсем валли специалистсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Шкулсемпе культура учрежденийĕсен йышĕ нумай хут ӳсрĕ. Республикăра пурне те пуçламĕш шкулсенче вĕрентессине, тĕпрен илсен, пурнăçа кĕртнĕ, хуласемпе рабочи поселоксенче çынсене çичĕ çул вĕрентме тытăннă. Çитĕннĕ çынсем хушшинче хутпĕлменлĕхе пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех пĕтернĕ.

Чăваш халăхĕ хăйĕн искусствине, хăйĕн культурине—формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмла культурине аталантарса чечеклентерчĕ. Пирĕн хамăрăн поэтсемпе писательсем, художниксемпе артистсем, композиторсем, учительсемпе врачсем ӳссе çитĕнчĕç.

Хуçалăхпа культура строительствинче тунă çитĕнӳсемшĕн Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине Ленин орденĕпе наградăланă.

Юлташсем! Тăватă çул каярах фашистла нимĕç захватчикĕсем социализм çĕршывĕнчи мирлĕ те пултаруллă ĕçе пăсрĕç. Пирĕн юратнă Тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх тухса тăрсан, большевиксен партийĕ, пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ мĕнпур совет çыннисене Октябрьти революцире аллă илнĕ аслă çĕнтерӳсене хӳтĕлемешкĕн кăкăрпа тăма чĕнчĕç. Вырăс халăхĕ пуç пулса тăнипе пирĕн Тăван çĕршыври мĕнпур халăхсем ирĕклĕхшĕн пынă аслă вăрçа çĕкленчĕç.

Ленинпа Сталинăн генийĕ туса çитĕнтернĕ совет строй çак йывăр та юнлă вăрçăра хăйĕн пысăк хăватне кăтартса пачĕ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, çĕнĕ йышши çар, мĕнпур саманасенчи чи аслă полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, Гитлерăн ура тупанĕнчен пуçласа пуç тӳпине çитиччен хĕçпăшалланнă кĕтевĕсене çапса аркатрĕ, сĕмсĕр те капайчăк тăшмана социализм çĕршывĕн хăватлă хĕçпăшаллă вăйĕсем умне чĕркуççи çине тăратрĕ, çапла вара этемлĕхе фашизмăн хăрушă чирĕнчен çăлса хăварчĕ.

Сталин юлташăн çарсене ертсе пырас генийĕ çĕнтерчĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕн сталинла идеологийĕ фашизмăн тискер кайăкла идеологине çĕнтерчĕ. Пирĕн партин идеологийĕ—пĕтĕм тĕнчипе чи малта тăракан вĕрентӳ—марксизм-ленинизм идеологийĕ çĕнтерчĕ.

Совет халăхĕн тата совет хĕçпăшалĕн пĕтĕм тĕнчине палăрса тăракан историллĕ çĕнтерĕвĕсене пирĕн большевиксен мухтавлă партийĕ, халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ организацилерĕç. Отечественнăй аслă вăрçăн чи йывăр кунĕсенче государствăна тата вăрçа ертсе пырас ĕçе Сталин юлташ хăй аллине илчĕ, çапла вара Тăван çĕршыва пĕтесрен çăлса хăварчĕ.

Сталин юлташăн, халăх çулпуçĕн ячĕ вăл—пирĕн халăх хăвачĕн палли, большевиксен партийĕн чысĕпе чапĕн палли пулса тăрать, мĕншĕн тесен халăха пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăракан, кĕрешӳре иксĕлми çирĕп пулакан, халăхпа таччăн çыхăнса тăракан большевиксен партийĕ кăна тĕнче валли государствăпа çар ĕçĕн çавăн пек чаплă генийне, ăсхалпа хăватăн çавăн пек улăпне çитентерме пултарчĕ.

Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденĕ иккĕмĕш хут панине, ăна Совет Союз Геройĕн ятне тата чи аслă çар званийĕ—Совет Союзĕн Генералиссимусĕ ятне панине чăваш республикинчи рабочисемпе колхозсем тата интеллигенци, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, çав тери хавхаланса кĕтсе илчĕç, вĕсем пĕтĕм халăх хăйсен аслă çулпуçне мĕнпур чун-чĕререн юратнине кăтартса пачĕç.

Аслă Сталина мухтав!

Юлташсем! Совет халăхĕ фашистла захватчиксене хирĕç туса пынă Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче чăваш халăхĕ Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕ. Чăваш республикин ывăлĕсем тăшманпа кĕрешнĕ çĕрте пысăк паттăрлăхпа хастарлăх кăтартрĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче командованин заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн тата çав ĕçре хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн республикăра çуралса ӳснĕ 46 çынна Совет Союз Геройĕн ятне панă, 28 пин çынна Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

Совет Союзĕн Геройĕсем—генерал-полковник Боголюбов тата инженери çарĕсен генерал-майорĕ Петров, Виноградов, Макаров, Трофимов, Филичкин, Марков, Марсельский пек паттăрсене—пирĕн земляксене, Сталин шкулĕн талантлă командирĕсене пăхса çитĕнтернĕшĕн чăваш халăхĕ большевиксен партине, халăхсен çулпуçне Сталин юлташа пĕтĕм чун-чĕререн тав тăвать.

Вăрçă çулĕсенче республикăри ĕççыннисем, тылра вăя хĕрхенмесĕр ĕçлесе, тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çара хастарлăн пулăшса тăчĕç. Пирĕн пур предприятисем те çĕршыв оборонишĕн ĕçлесе пычĕç. Пирĕн заводсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пĕр хутчен мар çĕнтерӳçĕсем пулса тухрĕç.

Чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана анăçлăн тултарнăшăн 1945 çулта республика Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Пирĕн колхозсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене яланах вăхăтра та тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пычĕç. Вăрçă пынă тăватă çул хушшинче Чăваш республикинчи колхоз хресченĕсем государствăна вăрçăченхи тăватă çул хушшинче панинчен 6,8 миллион пăт ытларах тырă панă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатнăшăн тата тырпул тухăçлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш республикине икĕ хутчен Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă.

Вăрçă çулĕсенче тылра вăя хĕрхенмесĕр ĕçленĕшĕн 521 çынна Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. СССР Верховный Совет Президиумĕн ĕнерхи Указĕ тăрăх ялхуçалăхне, промышленноçа, культурăпа искусствăна аталантарас тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемшĕн 303 çынна орденсемпе тата медальсемпе наградăланă.

Çак тĕслĕхсем пурте ĕнтĕ Чăваш республикинчи ĕççыннисем, мĕнпур совет халăхĕ пекех, вăрçă кунĕсенче пĕр таса ĕмĕтпе—тăшмана хăвăртрах çапса аркатас, мĕнпур вăйсемпе майсене Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн парас ĕмĕтпе пурăннине кăтартаççĕ.

Пирĕн çĕршыв, историри чи аслă вăрçа çĕнтерӳллĕн вĕçлесе, мирлĕ аталану тапхăрне кĕчĕ. Пирĕн умма çĕнĕ задачăсем тухса тăчĕç. Сталин юлташ çапла кăтартса пачĕ: вăрçă кунĕ суранĕсене пирĕн хăвăртрах тӳрлетсе çитермелле, совет государствин хăватне татах та çӳлерех ӳстермелле!

Хамăрăн республика 25 çул тултарнă чаплă юбилей кунĕнче орденлă Чăваш республикин ĕççыннийĕсем партипе совет правительстви, пирĕн çулпуç тата учитель Сталин юлташ умĕнче çапла тупа тăваççĕ: эпир хамăрăн социализмлă державăн хăвачĕпе чапне ӳстерессишĕн вăя хĕрхенмесĕр, татах та хастарлăнрах ĕçлĕпĕр!

Сывă пултăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв—Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ!

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр аслă вырăс халăхĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи халăхсен Сталинла пĕрлĕхлĕ çемьи!

Сывă пултăр Чăваш республики 25 çул тултарни!

Сывă пултăр пирĕн тăван та юратнă Сталин юлташ!

Сталин юлташа—урра! (Митинга пухăннă пĕтĕм халăх хавасланса урра кăшкăрать).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Гитлерла Германие çĕнтернĕ ятпа амнисти парасси çинчен

Гитлерла Германие хирĕç пынă вăрçа пирĕн çĕнтерӳпе вĕçленĕ ятпа, СССР Верховный Совет Президиумĕ çапла йышăнать.

1. Наказани парассинчен çаксене хăтарас:

а) виçĕ çултан сахалтарах хупса усрамалла тата унран çăмăлрах наказани памалла суд тунă çынсене;

б) çар промышленноçĕн предприятийĕсенчен тата ытти предприятисенчен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1941 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх айăпласа суд тунисене;

в) РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 28-мĕш статьинчи 2-мĕш асăрхаттарупа тата союзлă ытти республикăсен Уголовнăй Кодексĕсен тивĕçлĕ статьисемпе килĕштерсе, приговора пурнăçа кĕртессине вăрçă пĕтиччен хăвармалла суд тунă çар çыннисене;

г) çар преступленийĕсемшĕн РСФСР Уголовнăй Кодексĕн 193-2, 193-5, 193-6, 193-7, 193-9, 193-10, 193-10а, 193-14, 193-15 тата 193-16 статьисемпе тата союзлă ытти республикăсен Уголовнăй Кодексĕсен тивĕçлĕ статьисемпе айăпласа суд тунă çынсене.

2. Виçĕ çулран ытларах хупса усрамалла тунă çынсен ларса пĕтерейменсĕр юлнă наказани срокне çурри таран чакарас. Кун пек çынсен шутне контрреволюциллĕ преступленисемшĕн, социализмлă харпăрлăха çаратнăшăн (1932 çулхи августăн 7-мĕшĕнчи Закон тăрăх), бандитизмшăн, суя укçа тунăшăн, юри вĕлернĕшĕн тата вăрă-хурахла ĕççем тунăшăн айăпласа суд тунисем кĕмеççĕ.

3. Çаксене судпа айăпланман тесе шутлас:

а) пĕр çултан сахалтарах хупса усрамалла тата унран çăмăлтарах наказани памалла суд тунă çынсене;

б) СССР Верховный Совет Президиумĕн 1941 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх айăпласа суд тунисене;

в) çак Указăн 1-мĕш статьин «в» пунктĕнче кăтартнă çар çыннисене;

4. Çак Указа пичетлесе кăлариччен тунă преступленисемшĕн закон тăрăх виçĕ çултан сахалтарах хупса усрамалла суд тăвасси паллă пулсан, çар промышленноçĕн предприятийĕсенчен тата вĕсемпе танлаштарнă ытти предприятисенчен хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнăшăн, çавăн пекех тата çак Указăн 1-мĕш статьинчи «г» пунктра кăтартнă çар преступленийĕсемшĕн халĕ следстви тăвакан ĕççене тата судра пăхса тухайман пур ĕççене те пĕтерес.

Ытти тĕрлĕ преступленисемшĕн, суд виçĕ çултан сахалтарах хупса усрамалла тесе шутлать пулсан,—айăпланакан çынна наказани парассинчен хăтарать; виçĕ çултан ытларах хупса усрамалла тесе шутлать пулсан,—çак Указăн 2-мĕш статьи тăрăх вара наказани памалли срока кĕскетет.

5. СССР Верховный Совет Президиумĕн 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче «Вăрçă вăхăтĕнчи положени çинчен» кăларнă Указăн 4-мĕш статьинчи «а» пунктра кăтартса паман административлă взысканисене пурнăçа кĕртессине тата административлă йĕркепе штрафсем шыраса илессине (вĕсене ку таранччен шыраса илеймен пулсан), вĕсене çак Указа пичетлесе кăлариччен тунă ĕççемшĕн панă пулсан,—пăрахăçа кăларас.

6. Растратăшăн, вăрланăшăн, çаратнăшăн тата хулиганла ĕççем тунăшăн темиçе хутчен судпа айăпланă çынсене амнисти памалла мар.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи июлĕн 7-мĕшĕ.

СССР-та пурăнакан полякпа еврей çыннисене совет гражданинĕ шутĕнчен тухса Польшăна куçса кайма ирĕк парасси çинчен тата Польшăра пурăнакан вырăссене, украинецсене, белоруссене, русинсене тата литовецсене Польша гражданинĕ шутĕнчен тухса Совет Союзне куçса килме ирĕк парасси çинчен СССР Правительстви Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствипе тунă килĕшӳ

Юлашки вăхăтра Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительствипе Польша республикин Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви хушшинче калаçусем пулса иртнĕ. Вĕсем полякпа еврейсене, СССР-та пурăнакансене, совет гражданинĕ шутĕнчен тухса Польшăна куçса кайма ирĕк парасси çинчен тата Польшăра пурăнакан вырăссене, украинецсене, белоруссене, русинсене тата литовецсене Польша гражданинĕн шутĕнчен тухса СССР-а куçса килме ирĕк парасси çинчен калаçнă. Туслă обстановкăра пулса иртнĕ çав калаçусем хыççăн 1945 çулхи июлĕн 6-мĕшĕнче Мускавра Килĕшӳ туса алă пуснă. Çав Килĕшӳ тăрăх, 1939 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕ тĕлне Польша гражданинĕ шутланнă поляксемпе еврейсене тата вĕсен çемьисене СССР гражданинĕ шутĕнчен тухса Польшăна куçса кайма, вырăссене, украинецсене, белоруссене, русинсене тата литовецсене хăйсен çемьисемпе пĕрле Польша гражданинĕ шутĕнчен тухса СССР-а куçса килме ирĕк панă.

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1944 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче тата июлĕн 14-мĕшĕнче йышăннă Указсем тăрăх, çав Указсенче кăтартнă поляк çыннисене Польшăна куçса кайма ирĕк панă.

Килĕшӳ тăрăх, пĕр çĕршывăн гражданинĕ шутĕнчен тухса тепĕр çĕршыва куçса каясси кашнин хăйĕн ирĕкĕпе пулмалла.

Килĕшӳре кăтартса панă тăрăх, куçса каякансем хăйсемпе пĕрле хăйсен пурлăхне илсе кайма пултараççĕ: ял çыннисем—çемье пуçне 2 тоннăран ытла мар, хула çыннисем—пĕр тоннăран ытла мар. Тĕрлĕ профессиллĕ çынсене, кунсăр пуçне, хăйсен ĕç хатĕрĕсене илсе кайма ирĕк панă. Куçса каякансем хăйсемпе пĕрле пĕр пин злотый (е 1000 тенкĕ) укçа илсе кайма пултараççĕ.

Çак Килĕшĕве пурнăçа кĕртме пулăшас тĕлĕшпе Мускавра Совет Союзĕпе Польшăн Пĕрлешӳллĕ Комиссийĕ организациленет. Вăл комисси куçса каякансем пухăнакан вырăнсенче хăйĕн уполномоченнăйĕсене уйăрса лартма пултарать.

Совет гражданинĕ шутĕнчен тухма пултаракан çынсем, Килĕшӳ çине алă пуснă вăхăтра Совет Союзĕнче пурăнаканскерсем, 1945 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕччен вырăнти власть органĕсем урлă, СССР гражданинĕ шутĕнчен кăларма ыйтса, СССР Верховный Совет Президиумĕ çумĕнчи çав ыйтупа ĕçлекен комиссие заявлени пама пултараççĕ. СССР тулашĕнче пурăнакан çынсем çавăн пек ыйтăва СССР посольствисемпе консульствисем урлă пама пултараççĕ.

Польша гражданинĕ шутĕнчен тухма пултаракан çынсем, Килĕшӳ çине алă пуснă вăхăтра Польшăра пурăннăскерсем, çав срок хушшинче влаçăн вырăнти органĕсем урлă закон кăтартнă йĕркепе Польша гражданинĕ шутĕнчен тухас ирĕк ыйту тăратма пултараççĕ.

1941 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕпе 22-мĕшĕнче Украина, Белоруссия, Литва ССР-ĕсен правительствисемпе Польшăн Ирĕклĕх Комитечĕ украинец, белорусс, вырăс, русин, литовец, поляк тата еврей çыннисене куçарма ирĕк парасси çинчен йышăннă постановленисене çак Килĕшӳ хирĕç пымасть.

СССР Правительстви хушнипе çак Килĕшӳ çине ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Вышинский, Польша республикин Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительстви хушнипе Польша республикин СССР-ти Посолĕ Модзелевский господин алă пуснă.

КУЛЛЕН КИРЛĔ ТАВАРСЕМ ТУСА КĂЛАРАССИ ÇИНЧЕН

ВЦСПС секретариачĕ куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли цехсене çĕнĕрен ĕçлеттерме пуçланă май профсоюз организацийĕсен мĕн тумалли çинчен сӳтсе явнă. Союзлă наркоматсен промышленность предприятийĕсене производство каяшĕсенчен çав цехсем туса кăларакан продукцин 25 проценчĕ таран хăйсен магазинĕсемпе ларекĕсем урлă рабочисемпе служащисене сутма ирĕк панă. ВЦСПС секретариачĕ фабрикăсемпе заводсенчи комитетсене куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли квартал планĕсене вăхăтра палăртса хурассишĕн тăрăшма хушнă. Куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларма май пуррине палăртма, завод директорĕсемпе пĕрле, инженерсемпе техниксенчен тата рабочисемпе профактивран уйрăм бригадăсем туса хумалла.

Таварсем туса кăларассине лайăхрах организацилес тĕлĕшпе рабочи изобретательствин заводсенчи бюровĕсемпе пĕрле сĕнӳсем пухмалла, таварсем туса кăларас ĕçе ӳстермелли ыйтусене производствăри канашлусенче тăтăшах сӳтсе-явмалла, таварсен пахалăхне тата вĕсен хăйне ларакан хакне йӳнетес ыйтусене сӳтсе-явмалла. Ширпотреб цехĕсем туса кăларакан таварсене рабочисемпе служащисене сутма ОРС магазинĕсене вăхăтра илсе пынине куллĕнех контроллесе тăмалла. (ТАСС).

ВЫИГРЫШСЕН ИКĔ ВЫЛЯВĔ

Июлĕн 10-мĕшĕнче Мускавра Союзсен Çуртĕн Октябрьски залĕнче Государство заемĕсен икĕ вылявĕ—иккĕмĕш пилĕкçуллăх заемĕн (тăваттăмĕш çул кăларăмĕ) тата ССР Союзĕн Оборонине çирĕплетмелли заемăн вылявĕ пулса иртнĕ.

Иккĕмĕш пилĕкçуллăх заемĕн вылявĕнче 293.420 пин тенкĕлĕх 1.800 пин выигрыш пулнă.

ССР Союзĕн оборонине çирĕплетмелли заемăн вылявĕнче 72.588.800 тенкĕлĕх 442.550 выигрыш пулнă. (ТАСС).

Черчилль Францире

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 7-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Уинстон Черчилль премьер-министр Англирен Кăнтăр Франципе тухса кайнă. «Пысăк тройка» конференцийĕ умĕн вăл темиçе кун хушши канма шутлать.

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Уинстон Черчилль премьер-министр Черчилль госпожапа пĕрле июлĕн 7-мĕшĕнче Кăнтăр Францири Андая кайнă май Бордо хулине вĕçсе çитнĕ.

КАНАДА, ИТАЛИ ТАТА ДАНИ ПОЛЬША ХАЛĂХ ПĔРЛĔХĔН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЙЫШĂННА

ОТТАВА, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Канада правительстви Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Правительствине йышăнма шут тытнă. Канада премьер-министрĕ Макензи Кинг çапла каланă: Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине Крымри конференци йышăннă тăрăх тунă. Ăна тăвас умĕн поляк лидерĕсем хушшинче тата вĕсемпе союзниксен комиссийĕ хушшинче Мускавра калаçусем пулса иртнĕ. «Çав канашлусене пула,—тенĕ Кинг,—Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Вăхăтлăх Правительствине туса хунă, ăна вара Крымри конференцире пулнă аслă державăсем, çавăн пекех тата Франци те йышăннă». Кинг малалла çапла каланă: хальхи вăхăтра Канада правительстви, Польша халăхĕпе туслăн пурăнас тесе, Польша правительствине йышăнма шут тытрĕ, тивĕçлĕ вăхăтра пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем ярăпăр, тенĕ.

РИМ, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио пĕлтернĕ тăрăх, Италин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ официальнăй пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: Итали правительстви июлĕн 6-мĕшĕнче пулнă ларура Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Правительствине йышăнма шутларĕ, тенĕ.

КОПЕНГАГЕН, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Данири радио пĕлтернĕ тăрăх, Дани Польша Халăх Пĕрлĕхĕн Правительствипе йышăннă.

МОРГЕНТАУ ВЫРĂНТАН ТУХНИПЕ ТРУМЭН КИЛĔШНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 5-мĕшĕнче каçхине США президенчĕ Трумэн финанс министрĕ Моргентау вырăнтан тухнипе килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

БЕРГЕНРА ВЫРĂССЕН КВИСЛИНГОВЕЦСЕМ ВĂРЛАНĂ ИСТОРИЛЛĔ ПАХА ЯПАЛИСЕНЕ ТУПНА

ОСЛО, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бергенра (Норвеги порчĕ) квислинговецсем, гитлерла çарта пулнăскерсем, вырăссен Ораниенбаумра вăрланă историллĕ паха япалисене тупнă. Квислинговецсем гитлеровецсемпе пĕрле Ораниенбаумри двореца çаратас ĕçе хутшăннă.

ГРЕЦИРЕ СОВЕТ КИНОКАРТИНИСЕНЕ КĂТАРТМА ЧАРАÇÇĔ

СТАМБУЛ, июлĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Афины хулинчен килнĕ çынсем пĕлтернĕ тăрăх, Грецире совет кинокартинисене кăтартма чăрмантараççĕ. Çĕршыври хăшпĕр хуласенче совет фильмĕсене кăтартма чарса лартас шутпа хулиганла ĕççем тунă. Салоникăра паллă мар çынсем, грексен çар тумне тумланнăскерсем, совет фильмне кăтартакан кинотеатрти витринăна çĕмĕрнĕ те фоторекламăна пĕтерсе тăкнă. Совет фильмĕн фоторекламипе совет киновĕн эмблемине Афины хулинче те аркатса тăкнă.

Çавăн пек хулиганла ĕççем тунине Греци влаçĕсем чарма мар хăшпĕр чухне хăйсем те пулăшаççĕ. Сăмахран, «Сталинград эпопейи» ятлă совет фильмне кăтартнă вăхăтра «Титония» (Салоникире) жандармсем кино куракансене хĕнесе мăшкалласа пĕтерчĕ.

КĔСКЕН

* Болгарипе совет обществинче темиçе пин член шутланать. Обществăн çар, экономика, инженери, агрономи, истори, философи, медицина, юридически, литература тата искусство секцийĕсем пур. Провинцире обществăн 135 филиал шутланать. Болгари халăхĕ СССР çинчен пĕлесшĕн пулнипе кĕркунне София хулинче халăх университечĕ уçăлмалла. Вăл университетра Совет Союзĕн пурнăçĕн пур ыйтăвĕсем тăрăх та лекцисем пулаççĕ.

* Американецсен патруль карапĕсем нимĕçсен Японие тарма хăтланнă подводнăй лодкине тытнă. Çав лодкăн корпусенче 5 миллион доллар ытлăн пытарнă пулнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Улатăрти чугун çул транспорчĕн техникумĕ 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникумра çакăн пек отделенисем пур: 1) технологи отделенийĕ (вăл ирĕлтерсе е хĕртсе çыпăçтарас ĕçе пĕлекен техник-технологсене вĕрентсе хатĕрлет), 2) механически отделени (вăл пăравус хуçалăхĕн техник-механикĕсене вĕрентсе хатĕрлет).

Заявленисене июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Адрес: гор. Алатырь, Первомайская, 50. Железнодорожный техникум.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ С0158. Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000